# Виçĕ район чиккинче

Архив докуменчĕсем çирĕплетнĕ тăрăх Элĕк районне кĕрекен Мăн Ямаш вăтам шкулĕ 1885 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнче уйрăм çын киленче уçăлнă. Хучаш чиркĕвĕн тăвата класлă пуçламăш прихут шкулĕ шутланнă. 43 арçын ачапа 1 хĕр ачана Етĕрнери Сергей Гремячкин священникпа Хучашри Лаврентий Можаров учитель вĕрентме тытăннă. Çав çулхи çулла хресченсем шкул валли пĕчĕк çурт туса лартнă. Шкулăн 1900 çулта тунă çурчĕ вара халĕ те пур, унта – склад. Çав çуртран анатарах 1898 çулта Христос çуралнă ятпа йывăç чиркӳ çĕкленнĕ. Чиркӳрен икĕ хутлă шкул тусан 1935 çулхи çуркунне 7-мĕш класран пĕрремĕш кăларăм тухнă. Шкулта 170 ытла педагог ĕçлеме ĕлкĕрнĕ, халăх хисепне, тĕрлĕ наградăна тивĕçнĕ. Вĕренсе тухнисенчен чылайăшĕ Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче тăшманпа çапăçнă: аманнă, вилнĕ, çухалнă, Çĕнтерӳпе киле таврăннисем ĕçре хастарлăх кăтартнă. Паян вĕсенчен вата фронтовиксем иккĕн çеç пурăнаççĕ.

...Шкулăн 125 çулхи юбилейне хăна йышлă пухăнчĕ. Олег Данилов директор 17 педагог 101 ачана çирĕп те тарăн пĕлӳ парассишĕн тăрăшнине палăртрĕ. Элĕк райадминистрацийĕн вĕренӳ пайĕн пуçлăхĕпе Эдуард Николаевпа педагогика ĕçченĕсен профсоюз райкомĕн председателĕ Эльвира Ржанова, Шĕмшеш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Вячеслав Филимонов, «Партнер» ял хуçалăх предприятийĕн ертӳçи Аверкий Гурьев вĕрентекенсене Хисеп хучĕсем, парнесем парса хавхалантарчĕç, вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнче çĕнĕ ӳсĕмсем сунчĕç.

– Виçĕ район /Элĕк, Хĕрлĕ Чутай, Етĕрне/ чиккинчи авалхи шкул хăйĕн статусне çухатмĕ. Çавăнпа 15 çул каярах çĕкленнĕ çĕнĕ çурт тăррине пирĕн тĕплĕн юсаса çĕнетмелле. Ку – пĕрлехи тивĕç, – терĕ вĕренӳ пайĕн пуçлăхĕ. Çак шухăша пурте ырларĕç, ĕçе пуçăнма пулчĕç.

■ **Геннадий САВЕЛЬЕВ**